Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 145 (4714) *1998 çулхи декабрь (раштав) уйăхĕн 23-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Патшалăх Канашĕн пленарлă сессиĕнче

***Декабрĕн 21-мĕшĕнче Хусанта Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн вунçиччĕмĕш пленарлă сессийĕ ĕçлеме тытăннă.***

Ку сессие юбилейлă теме пулать, мĕншĕн тесен шăп утмăл çул каярах Тутар АССРĕн пĕрремĕш суйлаври Аслă Канашĕн пĕрремĕш сессийĕ пулнă. Сессие пĕрремĕш депутатсенчен пĕри Ефим Матвеев уçнă. Патшалăх Канашĕн председателĕ Ф.Х. Мухаметшин саламласа, ăна асăнмалăх парне панă. Çав кун Ефим Матвеев М.Ш.Шаймиев Президентпа пĕрле çак паллă датăна халалланă выставкăна уçнă çĕре хутшăннă, хăйĕн асаилĕвĕсемпе паллаштарнă.

Сессин кун йĕркине маларах çирĕплетнĕ вунвиçĕ ыйтусăр пуçне, Премьер-министр Р.Н.Минниханов сĕннипе тата иккĕ кĕртнĕ.

Тин суйланă депутатсемпе тата администрацисен çирĕплетнĕ пуçлăхĕсемпе паллаштарнă хыççăн, сесси кун йĕркинчи ыйтусене пăхса тухма тытăннă.

Экономикăпа социаллă пурнăçа 1998 çулта аталантарасси тата 1999 çула палăртни çинчен докладпа вице-премьер, экономикăпа промышленность Министрĕ **Ринат ГУБАЙДУЛЛИН** тухса калаçнă.

Тутарстан Республикин Президенчĕ М.Ш.Шаймиев 1999 çула палăртнă бюджет посланийĕпе депутатсене тата сессие йыхăрнисене финанс министрĕ **Роберт МУСИН** паллаштарнă.

Пренисем хыççăн депутатсем çитес çулхи бюджет проектне пĕрремĕш хут вуланă хыççăн йышăннă.

Сесси ĕçне ТР Президенчĕ **М.Ш.ШАЙМИЕВ** тата Премьер-министр **Р.Н.МИННИХАНОВ** хутшăннă.

Ларăва Патшалăх Канашĕн Председателĕ **Ф.Х. МУХАМЕТШИН** ирттернĕ.

Сесси малалла ĕçлет.

## Çын хăйĕн вырăнĕнче



*Хресченсен хуçалăхĕсен "Чулпан" ассоциацийĕнчи трактор бригадин бригадирĕшĕн Юнус Касымович Муртазиншăн хĕлле çуркуннепе çуллахинчен те яваплăрах тапхăр шутланать.*

*Шăпах вăл, бригадир ял хуçалăх машинисемпе çаклатмалли хатĕрсене хирти çурхи ĕçсем тĕлне вăхăтлă тата паха хатĕрленишĕн, çав вăхăтрах хуçалăхра çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те кирлĕ пулма пултаракан ытти техникăн юсавлăхĕшĕн яваплăх тытать. Юнус Касымович ĕçе пĕлсе йĕркелеме, механизаторсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Вăл хăй те маларах ахаль механизатор кăна пулнă. Унăн пуян опытне, техника лайăх пĕлнине, çаплах ĕçе йĕркелеме пултарнине шута илсе Ю.К.Муртазин пĕр вăхăт тĕп инженер пулса та вăй хунă. Анчах та вăл пӳлĕмре начальник пулса ларма юратмасть çав, унăн халăх хушшинче пулмалла. Хальхи вăхăтра вăл хăйне хăйĕн вырăнĕнче тесе шутлать: мĕн те пулсан шырать, тупать, çынсене сăмахпа тата ĕçпе пулăшать. Çавăнпа та мĕнле те пулин йывăрлăхсем пулсан тӳрех Юнус Касымович патне васкаççĕ. Рифкат Садыков та ĕçе аслă юлташĕсенчен нумай вĕреннĕ. Чăнах та ĕнтĕ, МТЗ-80 тракторпа 3-4 çул вăй хунă май професси вăрттăнлăхĕсене хăнăхса пынă. Унăн тракторĕпе часчасах сĕт турттарнипе вăл яланах юсавлă пулмалла. Çавăнпа та бригадирпа тĕл пулсан вăл яланах çĕннине, усăллине пĕлме тăрăшать.*

*Ӳкерчĕкре: хресченсен хуçалăхĕсен "Чулпан" ассоциацийĕнчи Ю.К. Муртазинпа Р.А.Садыков.*

## Йĕркеллĕ пурнăçшăн

Нумаях пулмасть Çамрăксен центрĕнче "Ачасен йĕркеллĕ пурнăçĕ" уйăхлăх иртрĕ, унта хулари тата ялсенчи шкулсенче 5-6 классенче вĕренекенсем хутшăнчĕç.

Мероприятисене ачасем хушшинче пирус турттассине, эрех ĕçессине, наркомание тата ыттине чакарас, сирсе ярас тĕллевпе йĕркеленĕ.

Кашни кун ачасем умĕнче районти тĕп больницăри врач-педиатрсем, психологсем, администраци çумĕнчи çула çитмен ачасемпе ĕçлекен комиссин яваплă секретарĕ тухса калаçрĕç. Вĕсем ачасен пурнăçĕ йĕркеллĕ пулнин пĕлтерĕшĕ çинчен кăсăк та ăнланмалла каласа пачĕç.

Ача-пăчасен библиотекинче ĕçлекенсем "Эпĕ сывлăха упратăп, хама хам пулăшатăп" ятпа кĕнекесен выставкине йĕркелĕнĕччĕ. ДЮЦри Л.И.Кутузова ертсе пыракан "Пукане театрĕ" кружока çӳрекенсем "Теремок" халап кăтартрĕç.

Кайран искусствăсен шкулĕнче ачасем валли концерт пулчĕ, унта çамрăк музыкантсем хутшăнчĕç.

Çаплах НГДУ бассейнĕнче экскурсире пулассине йĕркеленĕччĕ. Çакăн пек мероприятисем çамрăк ăрăвăн ăнланулăхне çирĕплетме пулăшасса шанас килет.

**А.ГАЛЯУТДИНОВА.**

## Тутарстан милицийĕн çĕнĕ ялавĕ

Декабрĕн 21-мĕшĕнче Хусан хулине Раççейĕн шалти ĕçсен Министрĕ Сергей Степашин килнĕ. Тутарстанти шалти ĕçсен Министрне Асхат Сафарова республикăри шалти ĕçсен Министерствин çĕнĕ ялавне чаплă лару-тăрура панă. Ку тĕллевпе Ирĕклĕх площадĕнче иртнĕ уява ТР Президенчĕ Минтимер Шаймиев, Премьер-Министр Рустам Минниханов хутшăннă.

Чаплă лару-тăру вĕçленнĕ хыççăн С.Степашин алкоголь продукцине туса кăларас тата сутас тĕлĕшпе патшалăх монополин опычĕпе паллашнă, республикăн тивĕçлĕ комитетĕнче тĕлпулу ирттернĕ. Кайран Раççейĕн шалти ĕçсен министрĕ журналистсен чылай ыйтăвĕсем çине хуравланă.

## Çĕнĕ çул сывхарать



### Çĕнĕ çул уявĕсен программи

**Районти культура çуртĕнче декабрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 31-мĕшĕччен:**

**Ачасен Çĕнĕ çулхи представленийĕ**

**- *"Çĕнĕ çул контакчĕ" халап***

**- *Çĕнĕ çул елки***

**Хулари предприятисемпе организацисенчен профсоюз елкисем ирттерме заявкăсем йышăнаççĕ.**

**Çав кунсенчех *"Сирĕн патра хăнара Хĕл Мучипе Юрпике"* (Заявкăсем тăрăх Хĕл Мучипе Юрпике килĕрен çӳреççĕ).**

**Районти культура çуртне методика кабинетне пымалла. Телефон: 2-24-87.**



**Декабрĕн 30-мĕшĕнче, 19.00 сехетре**

**"Кулă" миниатюрăсен театрĕн премьери (РДК).**

**Çĕнĕ çулхи театрализациленĕ "Çĕнĕ çул Хĕл Мучисĕр?" юмор каç-шоу. Билет хакĕ - 10 тенкĕ.**

**Декабрĕн 31-мĕшĕнче, 18.00 сехетре**

**Нурлат хулинчи тĕп площадьри елка çывăхĕнчи уяв.**

**- Çĕнĕ çулхи хаваслă эстафетăсем.**

**- Хĕл Мучипе Юрпике саламлани.**

**Нурлат хулипе район çыннисем тата хула хăнисем! Сире çĕнĕ çул уявĕсене кĕтетпĕр! Сире уяв кунĕсенче тĕрлĕ вылявсем, кулă-шӳт, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм кĕтеççĕ.**

**Администрацин культура пайĕ.**

## Виçĕ куна тăснă

Çынсен кăмăлĕсене тимлĕх уйăрса, çыхăну ĕçченĕсем хаçат-журнал çырăнтарассине юлашки кунччен тăсма йышăннă. Çавăнпа та хулари виçĕ почта уйрăмĕнче (тĕп, нефтяниксен тата сахăр вĕретекенсен поселокĕсенче) республика изданийĕсене **юнкун, кĕçнерникун** тата **эрнекун** çырăнтарĕç, ялсенче çырăнтару **кĕçнерникун** вĕçленĕ, район хаçатне вара хăть хăçан та çырăнма пулать.

Çапла майпа, 1999 çулхи çур çула такам мĕнле те пулин сăлтавсене пула хаçатсемпе журналсем çырăнса ĕлкĕреймен пулсан, çитес виçĕ кунта çырăнма пултаратăр. Çырăнтару пункчĕсене васкăр!

Официаллă хроника

## Çĕнĕ председатель суйланă

Иртнĕ эрнере хресченсен хуçалăхĕсен "Игенче" ассоциацийĕн членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулнă, унта Р.С.Хамидуллин хăй ыйтнине тĕпе хурса, ăна хуçалăх председателĕн тивĕçĕсенчен хăтарнă. Хресченсен хуçалăхĕсен "Игенче" ассоциацийĕн председателĕ пулма Рашит Надиевич Абдрахманова суйланă.

Пухура администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев , председательсен корпусĕн ветеранĕ С.С.Гафуров хутшăннă тата сăмах тухса каланă.

**“Татнефтепром” ОАО “Зузеевнефть” НГДУ хальхи вăхăтра пысăк улшăнусен умĕнче тăрать. Мĕнле улшăнусем-ха вĕсем, çĕнĕ управленин малашлăхĕ мĕнле пулĕ? Çак тата ытти ыйтусене эпир унăн начальникне, Ш.Г.ЯГУДИНА патăмăр.**

# "Зузеевнефть" НГДУ: çĕнĕ çула - çĕнĕ статуспа

- Чи малтан структура улшăнăвĕсем пулаççĕ. Кăçал, декабрĕн 30-мĕшĕнче “Татнефтепром” обществăн акционерĕсен пĕрлехи пухăвĕнче “Зузеевнефть” НГДУ ОАО составĕнчи уйрăлса тухнă предприяти туса хурас ыйтăва пăхса тухăпăр, унăн хăйĕн балансĕ тата расчет счечĕ пулĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн Ф.С.Сибагатуллинăн пуçарăвĕпе ку калаçу тахçанах пырать, çак ыйтăва правительство шайĕнче те сӳтсе явнă хыççăн ырланă, халь эпир ăна лайăх енчен татса парасса шанса тăратпăр. Уйрăлни пире мĕн парать-ха?

Чи малтан, хамăр тĕллĕн ĕçлесси, продукцие те хамăршăн тупăшла вырнаçтарасси. Вăл районшăн та питĕ усăлла пулĕ, кунта, Нурлат районĕнче “пропискара тăрсан” эпир тулли правăллă предприяти шутланăпăр: пурăнăпăр, анлăланăпăр тата тупăш илĕпĕр. Хамăр расчет счетне уçсан вара вырăнти налуксене тӳрех район бюджетне куçарĕç, вĕсем Альметьевскран килессе кĕтесси пулмасть.

Статус улшăнсан хамăр управлени аппаратне йĕркелемелле пулать, вăтам звено специалисчĕсем валли çĕнĕ ĕç вырăнĕсем уçăлĕç. Ĕçе йĕркелесси, малашлăх планĕсем çинчен калама вара иртерех-ха. Хальхи вăхăтра пирĕн промыслара ĕçлекен 71 скважина шутланать, вĕсен шутне малашне 320 çитерме шутлатпăр. Анчах та халех мар, вăл экономика лару-тăрăвĕнчен килет. Палăртнă тĕллеве пурнăçлама вара эпир хатĕр.

***- Шамиль Габдельхаевич, нефть ĕçлесе хатĕрлекен завода хута ярассипе çыхăннă ĕçсем мĕнле-ха?***

- Хамăр уçласа кăларнă нефте çулталăкне 100 пин тонна ĕçлесе хатĕрлекен завод питĕ паха та кирлĕ продукци туса кăларĕ: 60-шар пин тонна промышленность тата çул-йĕр битумĕ, фракци - 13,6 пин тонна - 200 градуса çити, 15,5 пин тонна - 200 градусран та çӳлерех (солярка). Республикăри çакăн пек типлă заводсенчен пирĕн предприяти чи хăватли пулĕ, çак продукцие туянакансем те чылай, çавăнпа та предприяти район экономикине çирĕплетессине пысăк тӳпе кĕртĕ. Строительствăна вĕçлеме тата нефтьпе битум установкине комплектлама 27 миллион тенкĕ, нефть кăлармалли технологие ĕçе яма - 40 миллион тенкĕ, пурĕ 67 миллион тенкĕ кирлĕ. Завода çитес çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне хута яма шутлатпăр. Унччен эпир строительствăпа монтаж ĕçĕсен юлнă 30 процентне пурнăçламалла, çаплах электроавтоматизаци, йĕркелесе хута ярас ĕçсене те вĕçлемелле. Электроподстанци тумалла, газ кĕртмелле, пушартан сыхлакан служба йĕркелемелле (кунта 26 çын, 2 машина пулĕ), лаборатори корпусне хăпартмалла. Унсăр пуçне территорие тирпей-илем кĕртмелле. Завода хута ярсан ĕç вырăнĕсем хушăнĕç. Кадрсем хатĕрлес ыйтăва та татса памалла, пурăнмалли çурт-йĕр тума 5 миллион тенкĕ ыйтрăмăр. Специалистсене аяккинчен явăçтармăпăр, хамăр патра хатĕрлеме шутлатпăр. Çавăнпа та Мамăк ялĕн кăнтăр пайĕнче пурăнмалли çуртсем кăна мар, социаллă объектсем - ача сачĕ, магазин ӳссе ларĕç, çулсем çĕкленĕç. Кĕскен каласан, çĕнĕ управленин производстви ӳсесси, тĕпрен илсен, нефть ĕçлесе хатĕрлекен завода хута янинчен килĕ. Çакă пирĕн производство ĕçне чылай улăштарĕ.

***- Эпир пĕлнĕ тăрăх, сăмах хăвăрăн производство участокĕсене анлăлатасси çинчен пырать.***

- Тĕрĕс, пур çавăн пек шухăш. Халь Патшалăх вăрман фончĕн балансĕнчи хăйăр карьерне хамăр çине “куçарасшăн”. Çаплах ДРСУн Мамăкри асфальтпа бетон заводне (ку типлă производство вĕт!) хамăра валли илесшĕн. Халлĕхе пирĕн çавăн пек плансем, ыттине пурнăç хăй кăтартĕ. Мĕн тесен те, пулăшасса кĕтместпĕр, хамăр ĕçлеме, аталанма тăрăшатпăр.

**- Ăнăçлăхсем сире.**

**С.ХАЙРУЛЛИНА калаçнă.**

## ХХ ĕмĕр инкекĕ

Нумаях пулмасть районти культура çуртĕнче Пĕтĕм тĕнчери СПИДпа кĕрешмелли куна тĕпе хурса, çамрăксем валли "ХХ ĕмĕр инкекĕ" темăпа дискотека пулчĕ. Унта пурĕ 100 çынна яхăн хутшăнчĕ - аслă классенче вĕренекенсем, ĕçлекен тата вĕренекен çамрăксем. Дискотекăна районти культура çуртĕнче концертсемпе шоу-программăсем хатĕрлесе иртерес енĕпе ĕçлекен Сергей Камитов ертсе пычĕ.

Мĕн вăл СПИД? Унтан мĕнле сыхланмалла? Ташăсем хушшинче çакăн çинчен калаçрĕç. Фойере темăна ăнлантарса пама кирлĕ условисем йĕркеленĕччĕ, тĕрлĕ конкурссем иртрĕç, призсем пачĕç (СПИД-инфо хаçат, презервативсем (!)...) Çуртасем çунакан тата лăпкă кĕвĕ илтĕнекен залри çамрăксене именмесĕрех ыйтусем пачĕç: СПИД мĕнле лекет, чи малтан камсем чирлеççĕ, çак хăрушă чир чуптусан лекет-и, СПИДпа чирлĕ çынпа çемье çавăрма юрать-и тата ытти те. Ертсе пыракан вĕсем çине тĕплĕн хуравлама тăрăшрĕ. Унăн сăмахĕсем тăрăх, тематика дискотекисене малашне те иртерĕç.



## Ĕçне кура хисепĕ

*Ильдус Ахметзянович Айсин - цемент хутăштаракан СМН-20 машина водителĕ. Ăна "Лениногорскри тампонаж ĕçĕсен управленийĕ" ОООн Нурлатри филиалĕн заказчикĕсен заявкисемпе час-часах буровойсенче пулма тӳр килет. Кунта вăл цемент турттарать. Тăрăшса пăхнипе, вăхăтлă юсанипе унăн машини яланах ĕçре. Айсин хăйне шанса панă ĕçе яваплăх туйса пурнăçлать, коллективра та ăна пурте хисеплеççĕ.*

*Ӳкерчĕкре И.А.Айсин.*

# Пуçарулăх кăтартнă - ӳсĕмсем пулĕç

Эпĕ ачасемпе çамрăксен центрĕнчи араб чĕлхин кружокĕн ертӳçи Миляуша Салимгареевна Усманова çинчен каласа парас тетĕп. Хăйĕн предметне вăл виçĕ çул вĕрентет, çав шутра икĕ çулне - Киклĕри шкулта ачасене араб çырăвне. Çамрăк пулин те, Миляуша учительсене, ашшĕ-амăшĕсене, вĕренекенсене араб чĕлхине юратма, хисеплеме вĕрентме пултарать. Пӳлĕме вĕренме килсен вĕренекенсем тӳрех араб сăмахĕн, тутарсен кивĕ çырулăхĕн тĕнчине лекеççĕ, ачасене кирлĕ литературăпа вăл хăйех тивĕçтерет. Пуян литература, пысăк пахалăхлă ӳкерчĕксем, таблицăсем, валеçӳ материалĕ, перфокартăсем тата хăй тунă курăмлăх хатĕрĕсем араб чĕлхине вĕренес туртăма вăйлатаççĕ. Кунта учительницăн сăнĕ те пысăк вырăн йышăнать - кăмăллă та ытарайми кулăллă, пысăк культурăллă, яштака пӳ-силлĕ, илемлĕ хĕр. Ачасене кашнине уйрăм тимлĕх уйăрни, уроксенче вара чĕлхене кăна мар, нравственноçа аталантармалли условисем туни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. М.С.Усманова хăйĕн предметне лайăх пĕлни те ачасене илĕртет. Вăл арабла питĕ лайăх вулать, сасăсемпе сăмахсене тĕрĕс калать.

Миляуша Салимгареевна араб чĕлхипе çырулăхне 1993 çултанпа вĕренет. Икĕ çул хушши Наманганра вĕреннĕ, тата иккĕ - Хусанти “Мухаммадия” Ислам институтĕнче, унтан питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухса диплом илнĕ. Вăл амăшĕ пек сăпайлă, йĕркеллĕ, ĕçе юратать, çынсене хисеплет. Хăйĕн наставникĕ куккăшĕ Ильяс хазрат тесе шутлать. Унăн тĕллевлĕхĕ, шухăшĕсем, пĕлӳшĕн çунни ачасене кăна мар, аслисене те килĕшеççĕ.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче ДЮЦра Миляуша Салимгареевна “Саудовская Аравия çĕршывне çулçӳреве кайни” темăпа уçă урок ирттерчĕ. Ачасем виççĕмĕш уйăх кăна вĕренеççĕ пулин те, лайăх результатсем кăтартрĕç. Вĕсем уйрăм карточкăсемпе ĕçлессине питĕ лайăх пурнăçларĕç. Кĕрхи вăхăтра ачасем алфавита, орфографи правилисене вĕренсе çитнĕ. Çак занятире араб чĕлхипе ваттисен сăмахĕсене нумай каларĕç. Занятие вăхăтĕнче пурнăçланă икĕ диктант араб çырăвне лайăх ăнланнине çирĕплетрĕ. Учительница ачасене çак çĕршыв, унăн авалăхĕ, культури, халăхĕ, паллă вырăнĕсем çинчен каласа пачĕ. Каласа панă май вăл ӳкерчĕксем тата ятарласа хатĕрленĕ стена хаçачĕ кăтартса пычĕ. Иртни çинчен каласа панине хальхи вăхăтрипе ăнăçлă çыхăнтарчĕ: “Хамăр районти мĕнле паллă çынсемпе мухтанма пултаратпăр-ха эпир?" Кĕскен каласан, уçă урок ăнăçлă иртрĕ. ДЮЦ администрацине (А.С.Галяутдинова директор, Р.Г.Хасанова завуч) ырă сăмахпа асăнас килет, вĕсем ачасемпе ĕçлеме Миляуша Салимгареевна Усманова пек çынсене явăçтарма пĕлеççĕ, вăхăт тупаççĕ, чи кирли вара - çамрăк кадрсемпе ĕçлеме лайăх условисем тума тăрăшаççĕ.

**Ф.ДАУТОВА.**




# Панулми эмел те...

Халăх медицининче панулмипе сиплевре питĕ анлă усă кураççĕ. Вăл юнра гемоглобин сахаллансан (малокрови), чĕрепе юн тымарĕсем чирлесен, ытлашши самăрлансан усăллă. Панулмипе колитсемпе аптрасан, вархырăм пăсăлсан, гастритпа чирлесен, уйрăмах ачасене сипленĕ чухне, усă курма сĕнеççĕ.

Шăнса пăсăлсан панулми ярса вĕретнĕ шыв ĕçсен, ÿслĕк çемçелет. Çак шĕвек шăк çулĕсенче чул пуррисене те сиплĕ, мĕншĕн тесен панулми организмра шăк кислоти пухăнасран хÿтĕлеме пултарать. Панулми хуппи ярса пиçĕхтернĕ чей лăпланма пулăшать.



Чĕрĕ панулмие теркăпа хырса пиçсе кайнă е тăм илтернĕ ÿт çине; тÿрленмен ытти кĕсенсем çине хураççĕ. Ÿт çинчи шăйрăксене, тута çуркаланнине иртерме панулми нимĕрĕпе услам çу хутăштарнă маç сĕреççĕ.

Сахăр диабечĕн çăмăл форминчен сипленме тепĕр чухне панулми йывăççин тымарĕсемпе усă кураççĕ: вăл шăкри сахăр виçине чакарма пултарать.

*ВУЛАКАН СĔНЕТ*

# Пилешĕм, пилеш

Хула, поселок, ял урамĕпе е вăрман хĕррипе пыратăн-и - пур çĕрте те аякранах кăвайт пек курăнакан хĕп-хĕрлĕ пилеш йывăççисене асăрхама пулать. Кăвасак та йÿçĕ, хĕрлĕ-сарăрах çырласем тăм ÿкнĕ хыççăн тутлăланаççĕ. Вĕсем юпа уйăхĕнче пиçсе çитеççĕ те йывăç çинче хĕл çитиччене лараççĕ, час-часах хĕлле юр çине хĕп-хĕрлĕ çырла тăкăннине асăрхама пулать.

Пиçсе çитнĕ çырласенче С тата Р витаминсем, органикăллă кислотасем, каротин, сахăр тата ытти кăвасак япаласем нумай. Медицинăра пилеш çырлисемпе витамин выранне усă кураççĕ. Тин çеç лайăх пиçсе çитнĕ çырласенчен хатĕрленĕ шерпет шăка тата каяша аван тухма пулăшать. Шерпете ревматизмпа чирленĕ чухне, шăк хăмпинче тата пÿрере чулсем пур чухне ĕçеççĕ. Шерпет хатĕрленĕ чухне пĕр килограмм пилеш çине 600 грамм сахăр яраççĕ,

Организмра витаминсем çитмен чухне икĕ кашăк çырлана икĕ стакан шывра сахăр ярса хуллен вĕретеççĕ те пĕчĕккĕн кун каçиччен виç-тăвата хут ĕçеççĕ. Шĕвеке чей выранне ĕçсен те аван. Хĕллехи вăхăтра шăннă çырлан шĕвекне сахăр ярса кунне виç-тăвата хут ĕçни те усăллă.

Халăх медицининче пилеш çырлисемпе шăка хăвалама, юн юхнине чарма тата цингана хирĕç кĕрешме усă кураççĕ. Тин çеç хатĕрленĕ пилеш шĕвекĕ дизентери чирĕнчен те пулăшать. Пилеш çырлипе кондитер промышленноçĕнче, ликер тата эрех тунă çĕрте анлă усă кураççĕ.

Çырласене хĕле кĕрес умĕн, тăм ÿксе тутлăлансан кăна пуçтараççĕ. Пуçтарнă çырласене тасатса кăмакара, 40-50 градуслă температурăра типĕтмелле. Типĕтнĕ çырласене икĕ çул таран упрама юрать. Пилеше аптекăсенче те йышăнаççĕ.

**В.АЛЕКСАНДРОВ.**

## Халăх медицини

### Сиплĕ ыхра

Пыр ыратнипе сунасран сипленме ыхра пулăшать. Тасатнă темиçе ыхра шăлне вĕтетсе лÿчĕркемелле те пĕр стакан сĕте ярса пăтратмалла. Унтан çак хутăша вĕретмелле, сивĕнме лартмалла. Шĕвеке кунне темиçе хут пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле.



### Эрехе тĕтĕм çĕнтерет

Алкоголизм туртăмĕнчен хăтăлма халăх сиплевçисем çакăн пек мел сĕнеççĕ. Типĕтнĕ хурăн папкисем çине сахăр сапмалла та вĕсене чĕртсе ямалла. Унтан çулăма сÿнтерсе тĕтĕмне сывламалла. Çак процедура хыççăн пĕр стакан хаяр шурă эрех ĕçсен малашне алкогольшĕн касăлас туйăм чылайччен çухалать.

### Пылпа мунча

Çывăрса каяймасăр аптракансемшĕн пылран лайăххрах эмел çук. Витĕмлĕ кăна мар, сиенсĕр те. Унсăр пуçне мунчара юман милĕкĕпе çапăнни паха - нерв тытăмне лăплантарать.

### Апат соди витĕмлĕ

Кăкăр хĕртнине хăвăрт иртерме пĕр стакан вĕретнĕ ăшă шыва пĕр чĕптĕм апат соди ярса ĕçни пулăшать. Шĕвеке васкамасăр, минутра 2-3 сыпкăм туса çăтмалла. Анчах та шывĕ сивĕниччен пĕтĕмпех ĕçсе ямалла. Ăшаланă тата йÿçек апат çиме пăрахсан, кăкăр хĕртни çинчен манса кайма пултаратăр.

# Ваттисем çапла сипленнĕ

**Холецистит** чухне ват йÿçекĕпе шăка хăвалакан лайăх рецепт пур: хурăн çулçине, уртăш çырлине (можжевельник), эрĕме (полынь), чĕкеç шатрине (тысячелистник) пĕр пек илсе хутăштармалла. 1 кашăк типĕ хутăша 1 стакан вĕри шыва ярса вăйлах мар çулăм çинче хупă савăтра 20-25 минут вĕретмелле, унтан 15 минут лартмалла та тăрăлтармалла. Çак имçама ирхине тата каçхине апат умĕн 30 минут маларах ĕçмелле.

**Простатитран** шăланпа (шиповник) катăркас (боярышник) çырлисене 10-шар пай, 5 пай лачака тип курăкĕ (сушеница топяная), 4 пай салтак тÿми чечекĕ (ромашка), 3-шер пай кĕтмелпе (брусника) хурăн çулçисем, шакла пуç (одуванчик) тымарĕ, 2-шер пай илепер курăкĕпе (донник) грушанка хутăшĕ лайăх. 2 кашăк çак типĕ хутăша 0,5 л вĕрекен шыва ярса 6-8 сехет чĕркесе лартмалла. Çак имçама кунне 5-8 хут çур стаканран кăшт сахалтарах ăшăлла ĕçмелле.

Сипленмелли тепĕр мел: 2 пуç сухана нимĕрлемелле те 0,6 л вĕрекен шыва ямалла, лайăх хупласа 2 сехет лартмалла. Кашни сехетрен 50-шар г ĕçмелле.

**Нерв системи** хавшанинчен 1/2-1 кашăк чечек тусанĕпе (хăвăр мĕн йывăрăш тайнине шута илсе) кунне 3 хутчен апат умĕн çур сехет - пĕр сехет маларах ĕçмелле.

**Геморрой** канăç памасть пулсан 4 кашăк туранă эрĕме 1л вĕри шыва ярса 6-7 мин. вăйлах мар çулăм çинче вĕретмелле. Лайăх витсе 6 сехет лартăр, унтан тăрăлтарăр. Çак имçампа клизма тăвăр. Пĕр кун чĕкĕнтĕртен, тепĕр кун эрĕмрен - çапла улăштарса клизма тума юрать. Эрнерен геморрой мăкăлĕсем пĕчĕкленĕç.

**Пит тĕсне лайăхлатма, çемçетме** панулмипе çăмарта маски пулăшĕ. 1 кашăк пĕçернĕ панулмипе 1 кашăк лăканă чĕрĕ çăмартана хутăштармалла та ăна пите сĕрмелле, типиччен тытмалла. Унтан сулхăн шывпа çуса тасатмалла.



**Çÿç тăкăнма** пуçласанах хăмла йĕкелĕпе усă курăр. Хăмлана вăл пиçсе çитиччен кăшт маларах август-сентябрьте пуçтармалла. 1 кашăк хăмлана 1 стакан вĕри шыва ярса 30 минут вĕретмелле. Сивĕнсен имçампа пуçа сĕрмелле.

**Шăннинчен, ÿслĕкрен** 20г эрĕме çур литр шурă эрехе ярса лартмалла. Мĕн чухлĕ нумайрах ларать, çавăн чухлĕ лайăхрах, анчах та 24 сехетрен сахал тытмалла мар. Кунне 3 хутчен пĕрер кашăк ĕçмелле. Ачасене валли ку имçам юрăхсăр.

**Сас "çухалсан" е ларингитран** анĕс (анис) вăрри аван пулăшать. Кастрюле пĕр стакан шывпа çур стакан анĕс вăрри ямалла та 15 мин вĕретмелле. Кăштах сивĕннĕ имçама тăрăлтармалла, унта чĕрĕк стаканпа пыл ярса тепре вĕретмелле. Çулăм çинчен илсе пĕр кашăк коньяк ямалла. Кашни сехетрен пĕрер кашăк ĕçмелле. Çак имçам талăк хушшинчех сасса тавăрать, теççĕ пĕлекенсем.

# Шăл-çăвар йĕркеллех-и?

Шăл тухтăрĕ патне каймалли сăлтавсем:

шăл чăтма çук ыратать, анальгин та пулăшмасть ĕнтĕ;

апат чăмланă чухне темскер хытăскер лекет, çывăхран пăхсан - пломба катăкĕ иккен;



шурă шăл пасти шăл тасатнă чухне хĕрелсе каять;

апат çинĕ чухне е шăл тасатнă чухне темскер чăрмантарнă пек туйăнать;

пăхсан сывă пек курăнакан шăл лăканать е шăл тымарĕ курăнма пуçланă;

шăл çинче çуркаланчăксем, путăксем е чулланнă вырăнсем пур;

пыр ыратать е час-часах ангинăпа чирлетĕр;

шăл кăларнă, анчах ун вырăнĕнчи пушăлăх нумайлăха мар, юнашарти шăлсем унталла куçса чалăшаççĕ;

шăлсен тĕсĕ е форми килĕшмест;

çут çанталăк сире малалла тухса тăракан шăлсем "парнеленĕ";

пломба е коронка чĕлхене, пите, тутана перĕнсе ыраттарать;

çăварта суран-шатра таврашĕ е урăхла улшăнусем пур;

тута хĕрри çуркаланса тăрать;



а ч а çуратма шутлатăр.

# Чĕре курăкĕ пулăшать

**Пахча хыçĕнче суккăр вĕлтĕрен нумай ÿсет. Çуркунне кăкласа пăрахас терĕм те - çак курăк усăллă тесе ăна хăварма хушрĕç. Мĕнле-мĕнле чиртен сыватма пулăшать-ши вăл? Çакна та пĕлес килет манăн: унăн вырăсла ячĕ мĕнле?**

**Л.САВЕЛЬЕВА.**

Вырăсла çак ÿсен-тăрана пустырник теççĕ. Чăвашла ăна икĕ ят панă: чĕре курăкĕ е суккăр вĕлтĕрен.

Чĕре курăкĕ халăх тахçантанпах усă куракан сиплĕ курăк шутланать. Вăл çул хĕрринче, пушă вырăнсенче, çырма-çатрасенче ÿсет. Урăхла каласан, ăна Раççейĕн пур тăрăхĕнче те курма пулать.

Утмăлмĕш çулсенче ирттернĕ ятарлă тĕпчевсем çак курăк кушак курăкĕ - валериана - пекех сиплĕ пулнине тупса палăртнă. Çак курăкран хатĕрленĕ настойкăпа çынна лăплантарас, пăшăрханма чарас, кăмăла çĕклес тĕллевпе усă кураççĕ. Çавăнпа та тухтăрсем унпа медицинăра усă курса чаплă çитĕнÿсем тунă. 1968 çултан пуçласа чĕре курăкĕ эмел тăвакан ÿсен-тăрансен хушшинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăннă.



Хальхи вăхăтра эмел ăстисем çак курăкран шĕвĕ экстракт тата настойка хатĕрлеççĕ. Çавăн пекех ăна типĕтсе пĕчĕк савăтсене тултараççĕ те килти условисенче настойка тума аптекăсенче сутаççĕ.

Чĕре курăкĕпе çак чирсенчен сиплемешкĕн усă курма пулать: ыйхă килмесен, ытла тарăхнă чухне, гипертонипе (юн пусăмĕ пысăк пулни), кардионеврозпа тата ытти чирсемпе аптрасан. Чĕре курăк эмелĕ çавăн пекех чирлĕ çынна лăплантарма, чĕре ĕçлессине лайăхлатма - урăхла каласан, нумай чирсене çĕнтерме пулăшать.

Унпа комплекслă сиплев иртерме ытти эмелсемпе пĕрле те усă кураççĕ.

# * Кулса илер-ха

- Хĕветĕр, эсĕ хĕрĕр вырăнпах чирлĕ выртать терĕн. Паян вăл лавккара черетре тăратчĕçке.
- Сывалчĕ çав.
- Мĕнле майпа?
- Ара, телевизорпа кăтартакан сериалсем пур чир-чĕртен те сиплеççĕ пуль.

* * *

- Тухтăр, мана ÿслĕк канăçсăрлантарать.
- Эсир миçере?
- 75 çулта.
- 25ре ÿсĕрнĕ-и?
- Çук.
- 40 çулта?
- Çук.
- Эсир нихăçан та чирлемен, апла пулсан 75 çулта ÿсĕрме те юрать.

* * *




Пĕр ватă хĕрарăм тухтăра ĕлĕкхи çинчен каласа парать:

- Шутлатăн та тĕлĕнсех каятăн. Медицина мĕнешкел малалла кайнă халь! Эпĕ çамрăкрах чухне тухтăрсем мана хывăнтарсах тĕрĕслетчĕç. Халĕ вĕсене чĕлхе кăтартсан та çитет.

# ТР Спартакиадине кайĕç

1998 çулхи декабрĕн 13-мĕшĕ. Вырсарникун, 10.00 сехет. Ачасемпе çамрăксен клубне районти шкулсенчи чи лайăх 15 команда пуçтарăннă. Кашни командăра икĕ арçын ача тата пĕр хĕр ача. Çав кун клубри шахматла вылякан пӳлĕмре уйрăм тата комадăпа выляса мала тухас тĕллевпе турнир иртрĕ.

Ăмăрту швейцари системипе пулчĕ (тухса ӳксе). Арçын ачасем хушшинчи çивĕч кĕрешӳре пĕрремĕш вырăна - Тĕкĕрмелĕнчи вăтам шкулта вĕренекен Герман Евдокимов йышăнчĕ, иккĕмĕшне - çав шкултах вĕренекен Миша Сотников, виççĕмĕш вырăна - хулари вăтам шкулти Саша Жижикин. Хĕрачасем хушшинчи ăмăртура хулари 2-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекен Лиля Муратова пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ, иккĕмĕшне Мамăкри Лена Садыкова, виççĕмĕш вырăна Тĕкĕрмелĕнчи вăтам шкулта вĕренекен Оксана Блинова тивĕç пулчĕ.



Командăсем хушшинчи вырăнсене çапла пайларĕç: пĕрремĕш вырăнта Тĕкĕрмелĕнчи вăтам шкул, унăн составĕнче Герман Евдокимов, Михаил Сотников тата Оксана Блинова, иккĕмĕшĕнче - хулари иккĕмĕш номерлĕ шкул , унта хутшăннисем - Саша Жижикин, Вова Калинин тата Лиля Муратова; виççĕмĕшĕнче - Якуркелĕнчи вăтам шкул, унта Александр Михеев, Анастасия Терентьева тата Саша Михеев хутшăннă. Ăмăртура уйрăм зачетра арçын ачасемпе хĕрачасем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннисене, çаплах çĕнтерӳçĕ команда грамотăсем тата укçа парнечĕç, уйрăм тата командăпа выляса 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене йышăннисене те грамотăсем пачĕç.

Халь районта суйласа пухнă команда йĕркелеççĕ, вăл Тутарстан Республикинчи шкул ачисен виççĕмĕш Спартакиадине хутшăнĕ. Ăмăртусем Хусан хулинче январĕн 7-мĕшĕнчен тытăнса 11-мĕшĕччен иртеççĕ.

Командăра вылякансене ăнăçлăх тата çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм сунатпăр.

**А.КОСТИН,**
**ДЮКФП шахмат тренерĕ.**

# Уява пăсас мар тесен

Çĕнĕ çул елкисене ирттернĕ тапхăрта пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнмасан, çынсен пурнăçĕшĕн хăрушă пушар пулма пултарать. Çавăнпа та Çĕнĕ çул уявĕсенче массăллă мероприятисем ирттернĕшĕн яваплă çынсем елкăсем вырнаçтарма пӳлĕмсем хатĕрлемелле. Елка йывăç çуртсенче пĕрремĕш хутран çӳлерех вырнаçтармалла мар, унтан тухмалли икĕ алăк пулмалла.

Елка çирĕп никĕс çине вырнаçтармалла, вăл çынсене пӳлĕмрен тухма кансĕрлемелле мар, унăн тураттисем стенапа маччаран пĕр метр аяккинерех пулмалла, ăшăтакан приборсене лекмелле мар. Елка целлулоидлă тата хăвăрт хыпса кайма пултаракан ытти теттесемпе тата япаласемпе илемлетме, çулăмран сыхлакан составпа йĕпетмен ватăпа хурса тухма, иллюминаци валли çуртасем çутма, бертолет тăварĕпе сапма юрамасть.



Елка иллюминаципе капăрлатма опытлă электромонтера хушмалла. Çутă сетĕнчен электричество токĕпе чакаракан трансформаторсăр усă курсан икĕ вольтлă лампочкăсемлĕ гирлянда çеç çакма юрать, электропроводсен тивĕçлĕ изоляци пулмалла. Иллюминаци юсавсăрлăхĕ палăрма пуçласанах (проводсем хĕрсе кайсан, лампочкăсем мăчлатма тытăнсан), ăна чармалла.

Бенгали вучĕпе усă курни те хăрушсăр мар. Обществăлла вырăнта çуртасем çунтарнăшăн яваплă çын пулмалла. Бенгали çуртисене ачасен çутма юрамасть, вĕсене вата, хут тата хăвăрт хыпса кайма пултаракан ытти материалсем патĕнче çунтармалла мар.

Массăллă мероприятисем ирттернĕ тапхăрта пушар хăрушсăрлăхĕн мерисем çинчен инструкци панă дежурнăйсем пулмалла. Пӳлĕмре пирус туртма, шăрпăк чĕртме юрамасть. Вырăнти ирĕклĕ пушар дружини дежурство йĕркелемелле.

Çĕнĕ çул уявĕсем ирттерессишĕн яваплă çынсем маларахах пӳлĕмсене пăхса тухмалла, алăксене тĕрĕслемелле, вĕсем хатĕр пулнине курса ĕненсен, пушар сӳнтермелли хатĕрсемпе тивĕçтернĕ хыççăн çеç мероприятисене пуçлама ирĕк памалла.

**А.АЮПОВ,**
**Нурлатри ПЧ ИГПИ аслă инспекторĕ, шалти служба капитанĕ.**

*Салтак юррисем

## Çеçки шурă кĕмĕл пек çурăлать

*Хура вăрман хĕррипе улмуççилĕх,*
*Çулçи симĕс чаршав пек хăпарать,*
*Çеçки шурă кĕмĕл пек, ай, çурăлать,*
*Улми сарă ылтăн пек пулаять.*

*Кăçал тырă-пулă лайăх пулĕ,*
*Хĕвелтухăç енне пуç тайĕ.*
*Кăçалхи çул эпир куççуль тăкни*
*Хĕвеланăç енне кӳлĕ пулĕ.*

*Хусантан та илтĕм сăран атă,*
*Утмăл-çитмĕл пăта çаптартăм.*
*Утмăл-çитмĕл пăта, ай, çитмерĕ,*
*Пирĕн пуçра хуйхă пĕтмерĕ.*

*Ăмăрткайăк вĕçет, ай, çӳлелле,*
*Курса юлăр пит çӳле вĕçиччен.*
*Эпĕ каяп сиртен, ай, уйрăлса,*
*Курса юлăр пит инçе кайиччен.*

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.


# Пĕлтерӳсем

**Сутăнать:**

Кăрмăш микрорайонĕнчи 1 пӳлĕмлĕ хваттер. Адрес: Гагарин урамĕ, 14-3.

* * *

"Жигули" автомобиль. Телефон: 5-41-19.

**Тĕрли:**

1 пӳлĕмлĕ хваттер туянатăп. Телефон: 2-20-38.

* * *

"Татнефть-Нурлатнефтешырав" ООО реструктуризацилени пирки ыйтусене пĕлтерӳ пичетленсен 30 кун хушшинче йышăнаççĕ.

* * *

Çамрăксен центрĕ шкулсемпе организацисем валли çĕнĕ çул елкисем, утренниксем йĕркелет.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче - Бал-маскарад. Лотерея билечĕсем вылянаççĕ!

Каçсем ирттерме заказсем памалли телефон: 2-23-10.

* * *

Учитель пӳлĕм е пĕр пӳлĕмлĕ хваттер тара илет, хаклă мар. Посредник телефонĕ: 2-14-30, Дима.

* * *

Магомадов ячĕпе тата Дохаев ячĕпе панă документсемлĕ (паспортсем, водитель удостоверенийĕсем) сумкăна чугун çул вокзалĕ патĕнчи "Встреча" кафере тупакана тавăрса пама ыйтатпăр, парне (200 тенкĕ) пулать. "Дуслык" хаçат редакцине (реклама пайĕ) памалла.

* * *

Çемье (Мускавран килнĕ) икĕ е виçĕ пӳлĕмлĕ хваттере нумай вăхăтлăха васкавлă тара илет. Телефон: 2-19-84.

* * *

1997 çулта туса кăларнă "Газеле" (тентланă) çăмăл автомобильпе улăштаратăп е сутатăп. Телефон: 5-46-07.

* * *

Мрамор тĕпренчĕкĕсенчен палăксем тăватăп, 1-2 кун хушшинче çырса паратăп. Хакĕсем калаçса татăлнă тăрăх. Адрес: Ленинградская урамĕ, 14.

* * *

Ултă çулхи турă лаша çухалнă, çамки шурă. Тупакана Гайтан ялĕнчи Ульяна Петровна Хворостьевана пĕлтерме ыйтатпăр.

*М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.*
*Пирĕн патра кăна!*

*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сиплене чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!*

*Сипленĕ кунсенче, эрнекунсенче, декабрĕн 25, январĕн 8-мĕшĕсенче, районти культура çуртĕнче 12 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*


# Тип тытнă вăхăтра

Хальхи тип вăхăчĕ ноябрĕн 28-мĕшĕнчен январĕн 7-мĕшĕччен пырать. Вăхăчĕн тăршшĕпе вăл мăнкунхи тип вăхăчĕ чухлех пырать, анчах та унпа танлаштарсан, кăштах "çемçерех" - тип тытакан çын юн кунпа эрне кунсенче пулă çиме пултарать. Пĕтĕмĕшле илсен, тип тытнă вăхăтра какайпа сĕт продукчĕсемсĕр пуçне пур апата та çиме юрать.

Паян тип тытнă вăхăтра пулăран мĕнле-мĕнле апат-çимĕç хатĕрлеме май пуррине кĕскен, асăнса хăварасшăн.

**Пулă студенĕ.** 1 килограмм чĕрĕ пулă, 5 стакан шыв, 1 пуç сухан, 1 кишĕр, 1 петрушка тымарĕ, лавр çулçи, хура пăрăç пĕрчĕлли, тăвар.

Пулла сивĕ шыва ярса, кишĕр, сухан, петрушка, асăннă ытти çимĕçсене хушса 1-1,5 сехет вăйсăррăн вĕретмелле. Пулă ашĕ шăмминчен ирĕккĕн уйрăлма тытăнсан шывне сăрăхтарса илмелле, сĕрмелле. Какайне шăмăран уйăрса вĕттĕн турамалла. Пĕçернĕ кишĕрпе петрушкăна тураса пулăпа хутăштармалла, студень хатĕрлемелли савăта хумалла, унтан шӳрпине хушса сивĕ çĕре лартмалла.

**Супа пĕçернĕ пулă.** 500-600 грамм чĕр пулла 3 апат кашăкĕ чухлĕ тип çу, 2 апат кашăкĕ виçĕ процентлă уксус, çур чей кашăкĕ тăвар хушмалла.

Пулăн пуçне, хӳрине касса илмелле, кĕлеткине кастрюле çурăмĕпе çӳлелле туса 1-2 рет хурса тухмалла. Уксус, çу хушса 2-3 сехет духовкăра е вăйсăр çулăм çинче пĕçермелле.

Сĕтел çине лартса парас умĕн тăварланă помидор е хăяр хушма юрать. Çакăн пек майпа хатĕрленĕ пулă шпрота аса илтерет.



**Сырма пулли яшки.** 1,5 килограмм пулă, 1,5-2 литр шыв, 2 сухан, 1 кишĕр, 1 петрушка, 2 çĕр улми, 1 апат кашăкĕ вĕтетнĕ укроп, 3 лавр çулçи, 8 хура пăрăç пĕрчи, 2 чей кашăкĕ тăвар.

Тăвар янă, вĕрекен шыва шултран туранă çĕр улми, пулă пуçĕпе хӳрине, вĕттĕн туранă сухан, тăрăхла туса вакланă кишĕр, петрушка тымарĕ ярса 20-25 минут вĕретмелле. Кăпăкне пухса илмелле, лавр çулçи, пăрăç хушса 5 минут вĕретмелле, унтан шултран каснă пулă ярса вăйсăр çулăм çинче тата 15-20 минут вĕретмелле. Яшка пиçсе çитнĕ çĕре тăвар, петрушка çулçи хушса 10-15 минут хупăлчипе хупласа лартмалла.

**Тăварланă хăяр шывĕпе пĕçернĕ пулă.** 1 килограмм пулă, 1 сухан, 1 петрушка, 2-3 стакан хăяр шывĕ, 6 хура пăрăç пĕрчи.

Сахал шăмăллă пулă илсен лайăх (çуйăн, çăрттан, треска). Тасатса пысăк касăксем туса вакламалла. Кастрюле пĕр сийпе хурса тухмалла, тăварланă хăяр шывĕ ярса вĕттĕн туранă сухан, петрушка, пăрăç хушмалла, 15-30 минут вĕретмелле. Пиçнĕ пулла хĕрен закускипе лартса пама юрать.


Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4906